31-300
136
139

ХУТА САҪАЛ ПЁЛЕКЕНСЕН ПИПЛИОТТЁКЁ

ТРУПИНА МАРХВИ

# ХӐНАРАН



Хакӗ 15 пус.

ЧӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ИСТАТТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР—1931

# УМСĂМАХ.

Ерех-сăра—ĕçхалăхĕн хăрушă тăшманĕ.

Ĕлĕк, патша пусмăрĕ айĕнҫе пурăннă ҫухне, ĕççыннисем пуринҫен ытла пурнăç хĕсĕк пирки нимĕн тăвайманнипе, „хуйхă-суйхăна путарса лартма, нушасене манма“ ĕçме тытăннă. Кайран вара, пĕрре вĕренсен, ҫас-ҫасах кил, çуртсăр, пурлăхсăр та тăрса йулнă.

Ĕççыннин халҫхи пурнăçĕ ĕлĕкхи пек мар ĕнтĕ, ĕççынни ушкăнлă хуçалăхсем урлă çĕнĕ пурнăç, сотсиалисăм тăват. Пирĕн вăхăтра „нушасене манма“ ĕçни кирлĕ мар, мĕншĕн тесен ушкăнпа ĕçленипе ĕççынни пурнăçри нушасене ăнăçлăн пĕтерсе пырат.

Анҫах епĕр пирĕн çĕршывра ĕçкĕ йăли пĕтнĕ теме пултараймастпăрха. Пуринҫен ытла „турă праçникĕсем“ вăхăтĕнҫе ĕçсе ўсĕрлсе пĕтни палă-ҫ:ì. Кун хыççăн вара укçа-тенкĕне пĕтерни, суранланса пĕтни, сывлăха пĕтерни, т. ыт. те.

Çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте ĕçкĕ таврашĕ питĕ пысăк ҫăрмав пулса тăрат.

Çак кĕнекери калав, ĕçкĕ сийенне ытла пур йенҫен те кăтартса параймаст пулин те— ĕçкĕ таврашĕн сийенне тата лайăхрах ăнланса илме пулăшĕ, тетпĕр.

Ҫăвашистат.

ХУТА САХАЛ ПĔЛЕКЕНСЕН ПИПЛИОТТЕКĔ

ТРУПИНА МАРХВИ

# ХĂНАРАН

(КАЛАВ)

ҪĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР—1931

# I

Пайан Каша йалёнҍе ҍиркў праҫникĕ. Таврари йалсенҍен пайан Каша йалне хытă ҍуптарса лавсем пыра пыра кĕреҫҫĕ. Ҫуллен ҫул ку йалсем пайанхи кун ĕҫкĕ тăваҫҫĕ. Кашни килтех ĕҫкĕ. Ҍухăнни те, пуйанни те хăй ҫемĕн праҫник йаҍĕпе ĕҫет. Ахăраў вара ўсĕр йал, ҫапăҫаў, ҫĕмĕрлет. Хăш ҍух хĕрлĕ автан та пĕлĕт хĕрринҍе ҫунаттисене сарса ташласа илет. Ирхине вара ҍипер ларакан ҫурт вырăнне хура кăмрăк курăнаў.

Крикка та пайан ĕҫкĕ ĕҫет. Ун патне хăнасем ҍылай килсе тулнă. Икĕ сĕтел ҫинҍе апат ҫимĕҫ купи купипех. Пĕр сĕтелли турăш кĕтессинҍе. Кунта арҫынсем лараҫҫĕ. Кĕреке умĕнҍе хĕрлĕ улаҍа кĕпеллĕ Крикка лараў. Крикка ҫўҫĕ кăвакарма пуҫланă—лутрарах

старик, кăмăллă питлĕ-куçлăскер, хăнисене ĕçтерет, çитерет; пĕринпе те, тепринпе те уççăн калаçать.

Тепĕр сĕтелли кăмака кукринерех тăрать. Кунта хĕрарăм ларса тухнă. Тĕрлĕрен тĕслĕ кĕпесем, пурçăн тутăрсем хĕрлĕн те çуттăн курăнаççĕ. Тенкĕ-шăрçа йăлтăртатни куçа илĕртет.

Каç пулса килет. Урам йенелле тухакан ҫӳреҫесем çине хĕвел анăçĕ йенҫи хĕрлĕ çутă ӳкнĕ. Анса ларма пынă хĕвел пысăккăн курăнать, шăн кантăк тĕррисене йăлтăртаттарать. Пӳртре ăшă, апат-çимĕç шăрши тутлăн килет: Крикка карҫăкĕ çуллă кукăљсем, хур кăвакал шарккуйĕсем, шăрттансем сахалах хатĕрлемен пуљ. Ав хăй карҫăкĕ шурă кĕпепе, сурпанҫалма сырнă, сĕтел патĕнҫен сĕтел патне кускаласа çӳрет. Кукăљсене пĕрин хыççăн тепĕрне каса каса лартать. Пашел кассинҫи хĕрĕ Кĕтерук

амӑшне пулӑшаҭ: сӑра ёҫтерет, кукӑђсене сётел ҫине пырса хураҭ. Кӗтерук хёрлӗ саттин кёпепе. Йарӑм пӳллӗ, тӑп-тӑп питлӗ куҫлӑ. Пуҫӗнђе пурҫӑн тутӑр. Хӑнасем умӗнђе илемлӗн йарӑнса утса ҫӳрет.

— Анне, кукамай, аҭа пи-ик муккана кайса пӑхай,—тет виҫӗ ҫур ҫулхи Саңкка, амӑшпе кукамӑшӗ хушшинђе ҫавӑрӑнкаласа ҫӳресе.

— Ан канҫӗрлеха,—тесе ӑшшӑн сёлтсе йараҭ Кӗтерук ађине.

Ађа пӳрт варнелле тухса тӑраҭ. Сарӑ ҫӳҫлӗ, хёрлӗ саттин кёпепе, хура ҫытмапа, пушмак ђӑлха тӑхӑннӑ.

— Ку-кама-ай, аҭа-апи-ик муккана кайса пӑха-ай, тет Саңкка кукамӑшне ђӗрҫитти аркинђен туртса.

— Крикка, ађа пӑрува кайса курасшӑн, илсе тухса кӑтарт ҫавна!—терӗ Крикка карђӑкӗ ађана Крикка патнелле сёлтсе.

— Кил кунта, кил!—терӗ Крикка

аҫана кăҫăк туртса, кĕрекерен пĕр хĕрлĕ улма илҫĕ те, улмине ҫӳлелле ывăткаларĕ.

— Кил, улма паратăп.

Аҫа кукашшĕ патне ҫупса пыҫĕ. Хавассăн улмана илҫĕ те, кукашшĕ ҫĕркуҫҫийĕ ҫине тайăнса тăҫĕ. Улмине ҫийет. Крикка аҫанăн варпуҫҫи пек ҫӳҫне аҫашласа шăлаҫ.

— Сирĕн ҫыха мĕнле ҫупаҫ ҫав, Саҥкка?—терĕ Крикка аҫана куҫран пăхса.

Саҥкка ҫавăнтах пуҫне каҫăртса ҫинҫе сассипе ихи-хи-хо-хок! тесе ҫухăрса илҫĕ.

Хăнасем кĕр кулса йаҫĕҫ.

Саҥкка унҫҫен те пулмарĕ урисене кукăрткаласа тăпăрт, тăпăрт сиксе алăк патнелле ҫупрĕ. Алăк патĕнҫе тепĕр хут ҫыхалла кĕҫенсе илҫĕ те, кукашшĕ патнелле тĕрлеттерсе пыҫĕ. Ҫав вăхăтра пӳрте Саҥук аппĕ—Сар Ваҥук килсе кĕҫĕ. Сарă, кăтра, йăп-

шăм питлĕ çын. Шурă кĕпепе, çăм атăпа Ваҥук çемçен утса кĕреке умнелле пыҭĕ. Вăл лашасене утă-сĕлĕ пама тухнă мĕн.

Ашшĕне курсан Саҥкка ашшĕ патнелле ҭупса пыҭĕ те, ӳыхалла сиксе илҭĕ.

— Ах маттурскер!

— Йепле ҭĕрĕ!

— Мĕнле илемлĕ тукалаӳ?—теççĕ хĕрарăмсем. Пур хăнасен куçĕсем те Саҥкка çинҭе.

— Пĕҭĕк ӳыхана сĕлĕ парас пуљ,—терĕ ашшĕ. Саҥккана арăк çине тытса ларҭĕ те, кĕссерен шурă премĕк кăларса паҭĕ. Аҭа премĕк çинĕ хупăранах ашшĕ арки çинҭен йăпăр-йапăр анҭĕ те:

— Ух, ух ту, атте,—тесе аллисене çӳлелле кăнтарҭĕ, ҭасах ашшĕ ури çине хăпарса та тăнă.

Ашшĕ аҭана сиктерме тытăнҭĕ.

— Ух! ух! ух! Аҭа йар-йар сикет. Аҭанăн кăтрарах çӳçĕсем вĕл-вĕл

тăваççĕ. Уçă сассипе аҫа ахăлтатса кулаҫ. Хаваспа тулли куçĕсем йăлтăртатаççĕ.

Ашшĕ аҫана йарăнтарҫĕ, йарăнтарҫĕ те, арки çине вĕлт сиктерсе хăпартса лартрĕ. Аҫана ытараймасăр ашшĕ çурăмĕнҫен савса илҫĕ. Ашшĕшĕн ку пĕртен пĕр ывăл аҫа пек пахи урăх нимĕн те пулман.

— Автан мĕн тет ça-ав!—терĕ кукашшĕ Саӈккана каллех астарса. Саӈкка каллех йăпăр-йапăр ашшĕ арки çинҫен анҫĕ те, мăйне алтан пек ҫăсса, икĕ аллипе хăлаçланса:

— Ки-ки-йи-йик! тесе çухăрса йаҫĕ. Саӈкка питне-куçне автанăн пек тăвасшăн тăрăшни пит кулăшла тухрĕ. Мĕн пур хăна аҫана кăна пăхса кулса йаҫĕç.

Кĕслеçĕ кĕслине хĕстерсе кĕҫĕ. Ăна курсанах Саӈкка:

— Тĕнкĕл, тĕнкĕл, ники-ники,— тесе алă çупса та йаҫĕ.

— Ну, ташла еппин!—терӗ кукашшӗ,—ыран Ҫӗрпӳ пасарӗнҫе лаша илсе парӑп.

— Шӑнкӑртаттарха кӑшт,—терӗ Саҥкка ашшӗ кӗслеҫе.

Лешӗ кӗсле калама тытӑнҫӗ, Саҥкка кӑшт пӑхса, итлесе тӑҫӗ те, кӗске, мӑнтӑр аллисемпе ҫупса йарса урисемпе тӑпӑртаттарма та тытӑнҫӗ. Патнерех тӑракан ҫынсем алӑ ҫупса йаҫӗҫ. Кукашшӗ кула кула такмаклаӗ:

Ей, ну йара пар!
Йарапине хама пар!
Улми ҫупаӗ,
Ҫулҫи ташлаӗ.
Титӗл-титӗл, тит-тит!
Титӗл-титӗл, тит-тит!

Аҫа ҫавӑрӑнкаласа ҫӳресе ташлаӗ. Пӗҫӗк урисемпе тепле те тукалаӗ.

— Ил аҫуна! Кун пек аҫана ҫасах куҫ ӳкекен!—терӗ пӗр ватӑрах хӗрарӑм Кӗтерука.

Кĕтерук ташласа тăракан аҫана кăп йарса илҫĕ те, кăкри ҫумне хĕстерсе сисĕнкĕсĕр аҫашласа ҫуптуса илҫĕ. Кĕтерукпĕн Саҥкка мĕн ҫухлĕ пахине калас та ҫук. Пайан аҫана ҫынсем умсăннипе амĕш кăмăлĕ тулнă.

Кĕтерук аҫана хăйпе пĕрле сĕтел хушшине лартрĕ. Ҫырла куклисем, пылпа кулаҫ, пан улмисем ҫитереҫҫĕ. Кашни хĕрарăм Саҥккана мĕн те пулин ҫитересшĕн сĕнеҫҫĕ, астараҫҫĕ, анҫах аҫа амĕш арки ҫинҫе ҫасах ыхйăларĕ.

— Пап-па,—терĕ вăл ҫыртнă улмине сĕтел ҫине хурса.

Кĕтерук аҫана хĕрарăмсен хыҫнелле, кĕтессе, хăйĕн шаҥ тутрине сарса вырттарҫĕ. Аҫа ҫасах ҫывăрса карĕ.

## II

Хăнасем килни ҫылай вăхăт иртнĕ. Ҫылай ерех-сăра хăнасем пырне йарăннă. Паҫăр йĕркеллĕ калаҫса лара-

кан ҫынсем халӗ ђылайӑшӗ „картаран тухнӑ“—хӑшӗ хӑрушлӑ сассипе ӗрешлесе йурӑ ҫавӑрасшӑн, хӑшӗ-пӗрисем пыр шӑтӑкӗпе кӑшкӑрашса ҫынсене хӑйсем мӗн каланине итлеттересшӗн. Сӑра-ерехне ҫаплах ӗҫеҫҫӗ. Пурте тутӑ пулин те апатсене активсе пӑхса ҫаплах кавлеҫҫӗ. Пӳртре тӳсме ҫук пӑђӑ. Ерех-сӑра, тар шӑршши сӑмсана ҫапать. Ђӗлӗм тӗтӗмӗ лӑп тулли—тӗтре пек курӑнать. Паҫӑр самай ҫутӑ ҫунакан краҫҫын халӗ тӗксӗмӗн ҫунать. Кӑшкӑрса калаҫни, кӗсле сассине пӗтерсе кӗрӗслеттерсе ташлани, арсӑр-пирсӗр йурлани хӑлхана йӗрӗнтерет. Такҫанхи ӗмӗрхи тискер етемсем ђӗрӗлсе килсе кунта пухӑннӑн туйӑнать.

Микул турӑ пек ҫутӑ пуҫлӑ старик кӗрекере лартнӑ ҫӗртех хӑй мӗн ӗҫнине айне кӑларса йанӑ.

— Ара, мӗн шӑпӑртаттарса йухтаратӑн? терӗ ӑна йунашар ларакан ҫын.

Микул турă пекки нимĕн те ҫĕнмест. Урлă-пирлĕ тайăнкаласа хур тăкмакки ҫăмлаҫ. Унҫҫен те пулмин какăрса илҫĕ те, Крикка тыттарнă ерех ҫерккине ҫăварне ÿпĕнтерҫĕ.

Акă пĕр ҫамрăкрах ҫын сĕтел хушшинҫен хăвăрт сиксе тухрĕ. Унăн пиҫĕ-куҫĕ тем ҫăтайми асап курнă пек ҫалăшшăн турткаланаҫ. Ҫынсене ҫавсапа хирсе алăк патнелле пыраҫ, куҫĕсене ҫарнă, тутисене шат тытнă. Сасартăк ҫăварĕнҫен пиҫке пăкки сирпĕнсе тухса кайнă пек хăсăк тапса тухрĕ. Алăк патне ҫитеймесĕрех шĕл хăсса йаҫĕ. Пăсăк ҫăмарта шăрши йеверлĕ йÿҫĕ шăршă пÿрте сарăлҫĕ. Ҫынсене хăсăкпа сирпĕтсе вараласа тула тухса карĕ.

Пĕр пустав халатлă ҫын кĕреке урлă уртăнса Крикки кăпа хыттăн хăй лаши ҫинҫен каласаҫ.

— Ман лаша пекки райунĕпе ҫук! тет халатли кăкрине ҫышса.

— Санӑн лашу манӑн патне те пыраймасӗ,—тет Крикка кӑвак сухалне йакатса. Хӗрӗнкӗсӗр, Крикка хӑнипе те ҫӗрре кӗрсе калаҫаӗ. Лешӗ тарӑхнӑ сасӑпа кӑкрине тата хытӑрах ҫышса хӑйӗннех. Унҫҫен те пулмин хӑнапа хуҫи сӗтел урлах тытӑҫса та илҫӗҫ. Сӗтел ҫинҫе тӑракан ҫетвӗрт кӗленҫи, стаккан ҫӑнкӑр-ҫӑнкӑр турӗҫ. Хӗрарӑмсем хушшинҫе такам ҫари ҫухӑрҫӗ. Шӑлӗсене ҫыртса куҫне-пуҫне ҫарса пӑрахса хӑнапа хуҫи пӗр-пӗрне тулласҫӗ. Крикка пит ҫӑмарти тӑрӑх йун йухса та анҫӗ. Темиҫе алӑ ҫапӑҫакансене ҫарма тӑсӑлҫӗ. Халатлӑ ҫынӑн арӑм упӑшкине йӗре йӗре кӗреке хушшинҫен сӗтӗрет. Аран-аран ҫапӑҫакансене йӑпаткаласа уйӑрҫӗҫ.

Ӗрлешеҫҫӗ, ҫӗмӗрлеҫҫӗ ӳсӗрсем. Анҫах тискерӗн, ирсӗрӗн туйӑнине ку пӳртре никамах та сисмест. Пурте пекех кунта тӑнне-пуҫне стем-

лёхне çухатнă ҫĕрҫунсем. Крикка карҫăкĕпе Кĕтерук кăна хăнасене пăхса тăрас майпе ӳсĕр мар. Хĕрарăмсем те арçынсенҫен сахалах йулмаççĕ, кашни пекех ӳсĕр. Кĕтерук пайан ерех тавраш пĕрре те сыпман. Сăрине ĕçесси ĕçкеленĕ те ăш хыпнăран кăна ĕçнĕ, пуç патне пымаллах ĕçмен

— Ĕçес мар çав ерехе, нихăçан та ĕçес мар, тесе пайан çак таранҫҫенех шухăшлаӗ Кĕтерук. Паçăр йала пырса кĕнĕ ҫух мĕн курни Кĕтерукăн куç умĕнҫе. Уй хапхине тĕрлĕ сăрпа сăрласа çапла çырнă: **Ҫиркӳ праçникĕсенҫе ĕçкĕсем туса ӳсĕрĕлесси кивĕ пурнăçран йулнă ирсĕр йăла.** Кĕтерукпа упăшки çак çырнине лашине тăратсах вуларĕç.

— Апла та... праçникре хуҥăм патне кайас килетçкеха,—тесе хуҫĕ Ваҥук. Лашине туртрĕ. Урампа пыраççĕ. Пĕр урам тăваткăлĕнҫе икĕ

шалҫа тăратнă. Шалҫасем хушшине хут карнă. Кунта ерех етеме мĕн сийен тунине карттин туса хунă. Акă ӳсĕр ҫын шăнса вилет, акă кунта ӳсĕрпе арăмне, аҫи-пăҫине хĕнет, ҫĕҫĕпе ҫикме хатĕрленет. Тепĕр карттинĕ ӳсĕрпе вут кăларса йани, ӳксе вилни... темĕн те тунă. Кĕтерукăн пĕтĕм карттинĕсене курсан ҫӳҫпуҫвирелле тăҫĕ. Хăрушла карттинсем! Упăшки ерех ĕҫекен арăма пит хĕрхенес килҫĕ. Йураĭ, Кĕтерукăн упăшки ĕҫкĕсенҫе кăна ĕҫет. Ахаљ ҫух та ĕҫес пулсан, ӳсĕрпе Кĕтерука, Саңккана хĕнес пулсан, мĕн курмалла?

— Комсомолĕссем ĕҫленĕ ĕнтĕ кăна,—терĕ Ваңук карттин патĕнҫен лашине хуллен уттарса.

— Ĕҫмелле мар ҫав ерехе,—терĕ Кĕтерук мĕн курнине пĕтĕмпех ăша ҫиксе.

— Ан ĕҫ. Курăпăрха пайан аҫу

патĕнҫе мĕнле ĕҫменнине, — терĕ упăшки кулкаласа.

— Ҫăнах та пĕрре те сыпас мар тетĕп, сыпмастăп. — Ку сăмахсене Кĕтерук ҫĕрэрен каларĕ.

Лаша урам тăрăх йуртаҫ. Коператтив лавкки умĕнҫе каллех ҫавăн пек ҫырса ҫапни пур. **Ерех—етем тăшманĕ**, тенĕ. Айаларах ерех етем сывлăхне пĕтерни ҫинҫен карттин тунă. Йунашарах тепĕр плаккат—кунта Каша йалĕнҫе раштав кунĕ ĕҫкĕ туса вăтам шутпа мĕн ҫухлĕ ĕҫмеҫиме, укҫа-тенкĕ пĕтнине кăтартнă. Пĕрех раштав праҫникĕ виҫĕ пин тенкĕ ҫура ӳкет. Икĕ ҫул хушшинҫе пĕр трактăр ĕҫсе ҫисе йараҫ, ҫак Каша йалĕнҫе.

— Вăт пирĕн хамăрăн та ыран пĕр ҫитмĕл-сакăрвун тенкĕ шывпа йухса кайнă пек кайаҫ—пĕрре ĕҫкĕ туса илес тетпĕр, — терĕ Ваҫук.

— Кайасси кайаҫ те-ха, тăвансене

йыхӑрнӑҫкеха ӗнтӗ, сӑри-ерехне те тӑкаклӑнса хатӗрленӗ, терӗ Кӗтерук.

— Йурӗ, кӑҫал ӗҫкӗ туса иртерер те, вара хамӑр та ӗҫке каймӑпӑр, хамӑр та нихӑҫан тумӑпӑр, — терӗ Ваҫук лашине хунӗ хапхи умнелле пӑртарса.

Ҫӗмӗрлет ӗҫкӗ... Ӳсӗр ҫынсем тата хӑрушлӑрах, ирсӗртерех. Кӗтерук канмалӑх тенӗ пек хӗрарӑмсен ушкӑнне пырса ларҫӗ. П. кассинҫи Микула—Кӗтерук йыснӑшӗ ерех ӗҫтерсе ҫӳрет. Микула хура куҫлӑ, мӑнтӑр питҫӑмартиллӗ ҫын. Ереххине ҫетвӗрт кӗленҫипех хулайне хӗстернӗ. Хӑй Микулай ӳсӗр, анҫах тӑнне ҫухатман, ури ҫинҫе хытах тӑрать. Микулана шутле „ерех питҫки“ теҫҫӗ, мӗншӗн тесен Микула ерехпе ҫамрӑкранах пиҫӗхнӗскер, темӗн ҫухлӗ ӗҫсен те ураран ӳкмест.

— Хуҫӑм ӗне халаларӗ. Ӗни сӗтлӗ-ҫуллӑ пултӑр тесе ӗҫерха кӑшт,

çăварха ёнине,—тет Микула ерех-хине кама та пулин тултарса парса.

— Сĕтлĕ-çуллă, ăнăçлă пултăр, пĕр пуçран пин пуça çиттĕр,—текелесе хĕрарăмсем йанк та йанк тур-таççĕ ерехе.

— Савнă, тĕнђе çутти пек, паха пултăрăм. ĕçсе парха пĕр ђеркке,— терĕ Микула Кĕteрука пĕр ђеркке тултарса парса.

— Ĕçместĕп, йысна!

— Мĕнле ĕçместĕн?

— Ĕçес мар тетĕп.

— Урамра комсомолĕссем çырса хунине хытă тăнларăни мĕн? Ей-й, каккуй ĕçместĕп текелет. Телекаткă мар пуђ вĕт?

— Телекаткă мар та, çапах ĕçме-стĕп. Комсомолĕссем çырса хуни те пĕтĕмпех тĕрĕс, ĕçмелле мар çав ерехе!

— Е-е-е, савнă пултăрăм! Есĕ пирĕн çын марçке! Çак йалта пайан

камăн килте комсомолĕс пур, телекаткă пур—ĕçкĕ тумалла мар тунă тет. Санăн çавăн пек çынсем патне каймаллаҫҫĕ, ĕç!

— Ĕçместĕп.

— Йурĕ, ан ĕç!—терĕ йыснăшĕ кăмăлсăр саспа.—Еппин ыран хăвăр пата пырассине ан кĕт,—терĕ те, çилленнĕ пек пулҫĕ.

— Ара, йысна, сана кам пирĕн пата ан пыр тет,—терĕ Кĕтерук та кăмăлсăрланса.

— Есĕ ерех ĕçменни—ан пыр тенипе пĕрех. Ĕç пĕр ҫеркке, сыпса çеç пар!

Кĕтерук пĕрмайах хăй ăшĕнҫе: ĕçес марҫҫĕ, сыпса та пăхас марҫҫĕ, тесе шухăшласа ларакансkер, халĕ хăй шухăшне улăштарҫĕ. Пĕрех сыпса пăрам çакна, кайтăр ку манран хăпса, тесе шухăшларĕ. Йыснăшĕ те ҫерккене Кĕтерук çăварĕ умĕнҫех тытса тăрат. Кĕтер-ук сып-

рĕ. Йыснăшĕ ҫерккене вăйпах Кĕтерук ҫăварне ӳпĕнтерҫĕ.

— Вăт маттур! пĕр ҫеркке маншăн ĕҫрĕн, ĕнтĕ аппушĕн тепĕрне йар! Тултарай.

— Ҫук-ук, урăх ĕҫместĕп,—тет Кĕтерук тути-ҫăварне тутăрпа шăлкаласа.

— Ĕҫетĕн! Ĕне пĕр мăйракаллă мар, иккĕллĕ, икĕ мăйракине те ҫăвас пулай! Пĕрне ĕҫнине тепĕрне ĕҫетĕнех ĕнтĕ! Каллех йыснăшĕ ерехе Кĕтерук тути патнех илсе пынă. Пĕрне ĕҫнĕ тĕк иккĕмĕшĕнҫен мĕнле хăтлас Кĕтерукăн. Кăшт сыпам, терĕ Кĕтерук, тутине тăсрĕ. Йыснăшĕ каллех ҫерккене Кĕтерук ҫăварнелле ӳпĕнтерҫĕ.

— Иккĕ пулҫĕ!—тет Микула хавассăн.—Ну тур калашле виҫҫĕ—виҫҫĕ ĕҫмесен епĕр ыран хамăр та сирĕн патăрта ĕҫместпĕр!—тет йыснăшĕ тепĕр ҫеркке тултарса.

Виççĕмĕшне Кĕтерук хăй аллипех тытса ĕçрĕ. Пĕтĕм шăм-шак çемĕçсе ҫĕркуççи вăйăсем пĕтсе кайнă пек туйăнҫĕç. Пуç хуллен, сисĕнкĕсĕр çавăрăнни ыррăн туйăнса карĕ.

— Ĕне ури тăваттă, тăваттăшне те çу, тет йыснăшĕ каллех ҫеркке тултарса. Кĕтерукăн ку ҫерккене ĕçес килсех карĕ. Ерех шăрши уç-çăн пек, тутлă пек туйăнҫĕ. Тытрĕ те, тĕппипе ĕçрĕ...

Çĕмĕрлет ĕçкĕ. Ӳсĕрсем хăшĕ-пĕри йăванса кайнă. Хăшĕ-пĕри пĕр-пĕринпе тытăçас çинҫе шăрҫĕсене тăратса лараççĕ, хăшĕ-пĕри вĕçĕм-сĕр „упа ташши“ ташлаť, кĕсле кĕв-вине пăхмасăр пĕр тĕлте кĕрĕслет-терсе сикет. Кĕтерукпа упăшки те тухса ташларĕç. Кĕтерук ташланă çĕртех сулăнса карĕ, ҫутах йăванса кайаҫҫĕ. Кĕтерукшăн пĕтĕм пӳрт ăш-ҫикки йĕри тавра çавăрăнаť. Çын-сем, сĕтелсем хăш ҫух пуç хĕрлĕ тă-

раççĕ. Кăмака ҫалăша ҫалăша кайат. Куç уменҫи пĕтĕм йапала çаврнаt, пĕтĕрĕнет. Йыснăшĕ пĕр пырса ерех ĕçтернĕренпе Кĕтерук мĕн ҫухлĕ ерех, пыллă сăра ĕçнине такçанах шутне çухатнă. Темĕнҫул вăхăт иртсен упăшки Кĕтерука:

— Киле кайăпăр, тумлан,—терĕ. Такам Кĕтерука кĕрĕк тыттарҫĕ. Кĕтерук, упăшки ăна апла каласан, ыйăхран вăраннă пек пулса йĕри тавра пăхкаларĕ. Пўртре çынсем сахалланнă. Аран-аран кĕрĕкне тăхăнса Кĕтерук шаљ тутрине шырат. Аҫа айĕнҫен шаљ тутрине çыпçусăр кăшт туртса илҫĕ. Саљкка шарт сиксе вăранса çухăрса йаҫĕ. Кĕтерук аҫи сассине илтсен тин аҫине аса илҫĕ пулмалла.

— К-кил, ы-ыљăм, киле ка-йатпăр,—тесе аҫине пит йуратса тытрĕ, кĕрĕкпе, тăлăппа ҫăркакалама хăтланаt, анҫах ҫăркана типтерĕ

çук: аҫанăн алли-урисем курăнсах тăраççĕ. Такам пĕр карҫăк Саҫккана амăшĕнҫен илҫĕ те, кашта çинҫе çакăнса тăракан пĕҫик утийалпа аҫана пит аван ҫăркарĕ.

— Аŭа, лартса йарам, çуна çинҫе аҫуна авантарах ҫăркан.

Кĕтерук кĕрĕкпе тăлăппала ҫăрканкаласа йăванса кайас çинҫе çеç алкум вĕçĕнҫе тăракан çуна çине тухса ларҫĕ. Кĕтерук Саҫккана тăлăп ăшне пит аван ҫăркаса лартрĕ. Кĕтеруксене ăсатма темиçе çын сăрапа, ерехпе тухрĕç, Ваҫук ҫух тайкалanса çуна ларҫăкĕ çине кĕрсе ларҫĕ.

— Ну, аҫасем, çул курки! —тет Крикка çуна умĕнҫе çарамасах тăрса. Кĕрŭшĕпе хĕрне ерех тыттараŭ. Темиçе ҫеркке те ĕçтерҫĕ. Пĕр хĕрарăм икшер стаккан пыллă сăра паҫĕ. Йулашкинҫен Микула та, те йăнăшпа, те йури ҫеркке вырăнне стак-

кан илсе тухнӑ. Ерехе стакканпа тултарса паҫҫӗ. Ваҥукпа Кӗтерук мӗн панине ҫаплах ӗҫрӗҫ.

— Сывӑ пулӑр, ҫиленсе ан кайӑр, терӗҫ ӑсатакансем.

Ваҥук лашине туртрӗ. Сивӗпе ӗнтӗркесе тӑнӑ лаша вӑшт ҫеҫ хапхаран тухса карӗ.

— Карӗҫи?—терӗ Крикка карҫӑкӗ алкум вӗҫне хыпаланса тухса.—Йамалла марҫҫӗ те...—терӗ вӑл пӑшӑрханса.

— Мӗнле ан кайҫҫӑр вӗсем? Ыран хӑйсем ӗҫкӗ ӗҫеҫҫӗ те, вара кунта ҫӗр выртса тӑраҫҫӗ-и?— терӗ Микула. Пӳрте кӗрсе карӗ.

— Пит ӳсӗр, кайман пулсан авантарах пулӗҫҫӗ тен... Вӗсем тухса кайнӑ ҫух хам тӗп сакайне кӗнӗҫке, ах йамалла марҫҫӗ... тет карҫӑк пӗҫҫенех алкум вӗҫӗнҫе тӑрса йулса. Кӗтерукпа кӗрӳшне кӑларса йанӑшӑн пӑшӑрхансах пӳрте кӗрсе карӗ.

## III

Ваӈук лаши пуҫне ухса, ҫилхине вӗҫтерсе ҭупаҭ. Ҫанталӑк тӳлек. Шартлама сивӗ. Уйра ҫуна йӗрленисӗр пуҫне пӗр сасӑ-ҭӗвӗ те илтӗнмест, пӗр ҭӗрӗ ҭун та курӑнмасҭ. Кӑвак тӳпере ҫӑлтӑрсем шултран курӑнса урисене вӗлтӗр, вӗлтӗр выҕатса тӑраҫҫӗ. Каталнӑ уйӑх куҫне хӗссе пӑхаҭ. Ваӈук ларҭӑк ҫинҭе ларса пынӑ ҫӗртех ыйӑхланӑ. Тӑлӑп ҫухине тӑратнӑскерне, ӑна сивӗ те тимест. Ҫуна йарӑннӑ майӗн ыйхӑ тутлӑ килет. Ваӈук малалла ӳпӗнсе, ҫуна умӗ ҫине тайӑнса, туйми ҫыварат.

Кӗтерук ним сасӑ памасҭ. Вӑл йалтан тухаҭҭенех ӗшеннипе, пит ӳсӗррипе вилнӗ пек ҫыварса кайнӑ.

Саӈкка амӗш арки ҫинҭе, ӑшӑ ҫӗрте, ларса пыраҭ. Алли-урине утийалпа авраса ҭӑрканӑскер пӗр сиккеле-

месĕр ларать. Унăн та ыйхă килет. Кăшт кайсан Саҫкка та тĕлĕрҫĕ.

Лаша килелле хавас майĕпе хытă ҫупать. Вăрмана ҫитесси те инҫе мар. Вăрман витĕр тухсан киле ҫитеҫҫĕ. Вăрман хĕрринҫе, икĕ ҫул йӳппи тĕлĕнҫе, пĕр тунката хурăн курăнса ларать. Лаша ҫипер ҫупса пынă ҫĕртех ҫав тункатаран хăраса пĕр йенелле йăлт пăрăнҫĕ. Ҫуна сасартăк сиксе илсе ҫалăшрĕ те, Саҫкка ҫул хĕрнелле вăнк ывтăнҫĕ. Утийалпа ҫăркаса пĕтернĕскер, Саҫкка йур ҫине ӳксен тин ҫари! ҫухăрса йаҫĕ. Утийалне сирсе ура ҫине тăҫĕ, йĕри-тавра пăхкаларĕ. Хăвăрт кайакан ҫуна хура ҫăмха пек курăнать.

— Ан-не-е, анне-е-е! Еп пы-йаа-ап, епĕ те паххапа кайап!— тесе йĕрсе ҫухăрҫĕ. Ҫуна хыҫҫăн ҫупрĕ. Пĕҫĕк пушмакĕсемпе йура ҫĕрик-ҫĕрик тутарса ҫупать. Ҫупать, ҫупать аҫа, анҫах ҫупни малалла каймасть. Ла-

ша хӑранӑ майӗпе тата хытӑрах ҙупрӗ пулас. Умри хура пӑнҙӑ ҙасах куҫ умӗнҙен ҫухалҙӗ. Ашшӗ-амӑшӗ аҙа сассине, вӑл ӳксе йулнине сисеймен. Амӑшӗ вилӗ ӳсӗрскер хӑй йӑванса йулас пулсан та туйас ҫук. Ашшӗ ҫуна ҙалӑшса сиктерсен пӗр самантлӑха вӑраннӑ пек пулнӑҙҙӗ, анҙах куҫне те уҫаймарӗ, пуҫне те ҫӗклеймерӗ: ӳсӗрле ыйхӑ ытла та йӑвӑр пуснӑ. Ҫуна курӑнми пулсан аҙа ҙупма ҙарӑнҙӗ. Пӑхса тӑраҭ, йӗрет. Шартлама сивӗ аҙа ҫанҫурӑмне, питне-куҫне ҙӗпӗте пуҫларӗ. Аҙа тӑнӑ ҫӗртех аллине пӗҫӗ хушшине хӗстерсе куклене, куклене анаҭ.

— Анне-е, ыш-ш! Епӗ те паххапа кай-а- а-ам! Сапӑнса кайса хурлӑхлӑ йӗрет.

Амӑш айакра. Ҫуна сасси те илтӗнми пулҙӗ. Аҙа сивӗпе ӗнтӗркенӗскер утийалӗ патнелле тӑнк-тӑнк тутарса утса пыҙӗ. Утийалӗ тӗлне ҫитрӗ те

аллисене ҫ̆ăсса утийал ҫине ӳпне лап ӳкрĕ. Сивĕ, питĕ сивĕ. Аҫ̆анăн алли-урисем хытма пуҫларĕҫ.

— Ы-шш-шишша, анне-е, ыш!— тесе йĕрет аҫ̆а паҫăрхи пекех, анҫ̆ах сасси халĕ йăвашланнă, хытах илтĕнмест.

Аҫ̆а ҫ̆ылайҫ̆ҫ̆ен аллипе питне хупласа выртрĕ. Выртсан выртсан пуҫне ҫĕклерĕ те, ҫ̆ун хавалĕпе: анне!— тесе ҫухăрҫ̆ĕ. Вара каллех питне аллисемпе хупласа выртрĕ. Хуллен йăнăша пуҫларĕ.

Тем ҫ̆ул вăхăт иртрĕ. Аҫ̆а йăнăшсан, йăнăшсан шăп пулҫ̆ĕ. Йĕри тавра пĕр ҫ̆ĕрĕ сасă илтĕнмест. Аҫ̆а вилнине никам та курмарĕ. Кăвак тӳперен ҫеҫ ҫăлтăрсем куҫĕсене ҫ̆арса пăхса тăҫ̆ĕҫ. Икĕ-виҫĕ ҫăлтăр пĕр тĕксĕмленсе, пĕр ҫутăлса илҫ̆ĕҫ. Куҫĕсене мăҫ̆-мăҫ̆ туса илнĕ пек туйăнҫ̆ĕ. Таҫтан пĕр пайрака тӳлек ҫил вăр вĕҫсе килҫ̆ĕ. Шăнса вилнĕ аҫ̆ан кĕ-

пи аркине, кăтраланса тăракан ҫӳҫ пайракине хуллен вĕрсе илҗĕ те, сисĕнкĕсĕр ҫухалҗĕ.

Уйра шăп тӳлек. Вăрман урлă шурăмпуҫ ҫутти килни палăрат.

## IV

Ваҗукпа Кĕтерук килне тул ҫутăлсан тин ҫитрĕҫ. Лаши ҫул йӳппинҗе урăх ҫулпа кайнă мĕн. Пилĕк ҫухрăм кайас вырăнне вĕсем вунпĕр ҫухрăм лăп тавра кайса ҫаврăннă.

Ваҗук хайсен хапхи тĕлне ҫитсен арăмне ҫурăмĕнҗен тĕккелесе:

— Тăрăр, шăнса вилмерĕри?—терĕ. Кĕтерук упăшки тĕккелесен тин вăранҗĕ. Ахлаткалса, тайăнкаласа ҫуна ҫинҗен тăҗĕ. Арăмĕ ҫуна ҫинҗен пĕҗҗен тăнине курсанах Ваҗукăн ҫан-ҫурăм вĕриленсе, сивĕнсе карĕ, ҫӳҫĕсем вирелле тăнă пек туйăнҗĕҫ, җĕре хăвăрт кăртлатса тап-

са илҗӗ. Пӗр самантлăха Ваҥукăн җӗнме сасă та çук пек...

— Ӳксе йулнă! Ӳкерсе хăварнă! тесе хайаррăн çухăрса йаҗӗ Ваҥук.

Кӗтерук тин ыйхăран вăраннăскер тăпсăр çын пек пулса кайнă.

— Аҗа ăçта? Аҗа ӳксе йулнă вӗт! терӗ Ваҥук. Хай çавăнтах уласа йӗрсе йаҗӗ. Кӗтерук упăшки мӗн каланине тăнласа илсенех ăçта тăнă çавăнтах йăвансах кайрӗ. Ваҥук лашана вăр-вар çавăрҗӗ те, çуна çине тăрса çавра-çил пек кайалла вӗçтерҗӗ.

Ваҥук лашине пӗр хӗрхенмесӗр җуптарай̆, хытă çапай̆. Акă вăрмантан тухса тунката патнелле çитет. Айакранах çул хӗрринҗе хӗрлӗ йапала курăнҗӗ. Ваҥук куç хупса илиҗҗен тенӗ пек аҗи патне çитрӗ. Аҗи пӗҗӗк аллисемпе питне хуплана та, ӳпне выртай̆. Җӗрӗ пекех курăнай̆. Ваҥук аҗапа хăвăрт йарса

илҫĕ те, сывласа йараймасăр ҫавăркаласа пăхрĕ. Аҫи пăр татки пек кăт хыҫă. Хăрах куҫне аллипе хуплана, хăраххи, уҫăскер, шурă илнĕ пек курăнҫĕ. Пăр татки пек куҫпе Саӊкка ашшĕ ҫине пăхнă пекех туйăнҫĕ. Ваӊук хăйне хăй тем туса пăрахасса ҫитрĕ, анҫах ним тума та ҫук! Аҫа виллине тăлăп ăшне хупса, кăкăр ҫумне хĕстерсе Ваӊук лашине килелле хăваларĕ.

## V

Ҫĕрле. Пайан Ваӊукпа Кĕтерук патĕнҫе хăнасем пулмаллаҫҫĕ, урăмсурăм ĕҫкĕ иртермеллеҫҫĕ, анҫах пур килнĕ пек хăнасем саланса пĕтрĕҫ. Ваӊук хунĕпе хуӊамăшĕ кăна йулнă. Пÿртре киҫемлĕ. Ахлатнă, йĕнĕ сассем илтĕнеҫҫĕ. Саӊкка турăш айĕнҫе, пĕҫĕк тупăкра выртай. Кĕтерукпа амăшĕ тупăк умĕнҫе лараҫҫĕ. Кĕтерука амăшĕ ÿсĕрлетҫен

ĕçнĕшĕн йĕре йĕре ўпкелет. Кĕтерук ҫĕрене касакан сасăпа, хăш ҫух сывлăшне çавăрса йараймасăр, йĕрет. Саҫкка аллине Кĕтерук тыта тыта пăхса сывлăшпа ăшăтаť.

— Ах! пĕтертĕмçке сана, пĕтертĕм, аҫам! Ах! хам ўсĕрри пĕтерҫĕ! Мĕншĕн кайрăмши ĕçке! Мĕншĕн ĕçрĕмши? Тĕрĕссипе çырнă комсомолсем! Кирлĕ мар ĕçкĕ! Ĕçкĕ пĕтерҫĕ ман аҫана-а Йĕрет Кĕтерук. Хăш ҫух урайне луҫăркансах анаť.

Сĕтел вĕçĕнҫе Крикка пĕр шарламасăр лараť. Вăл пайан кунта килиҫҫен Çĕрпў пасәрне кайса килнĕ. Саҫкка ваҫҫи тетте — çуналлă лаша илнĕ.

Теттийĕ акă хаҫ сĕтел çинҫех тăраť.

Алăк патĕнҫи вырăн çинҫе Ваҫук вырташ. Анҫах вăл çывăрмасť. Хупнă куçĕсенҫен тапхăр тапхăр вĕри куççулĕ йухса анаť. Хăш ҫух

арăмĕ ҫине пăхса илет, вара каллех куҫне хупса шăлне ҫыртаť. Ваӈук ывăлне ђĕртес тесе темĕн ђухлĕ тăрăшрĕ. Тупса килсенех йурпа, пăрлă шывпа сăтăрђĕ, тухтăра та илсе килсе пăхрĕҫ—ађа ђĕрĕлмерĕ.

Ĕнер Саӈкка ђупкаласа выљаса ҫӳрени халĕ те куҫ умĕнђе. Тупăкран тăрса, сĕтел ҫинђе тăракан теттене мăнтăр аллисемпе йарса илессĕнех туйăнаť.

Послано в набор 1|VI 31-г.
Подписано к печати 20|XI-31 г.
Редактор Л. АГАКОВ.

Отпеч. в типографии № 1 Чувашгиза г. Чебоксары

Уп. Чувашлита № 1336 Заказ № 648 Тираж 5000 экз.
Ст. ф. Б 125×180 Об'ем 1 п. л.

Цена 15 коп.

М. Трубина. ИЗ ГОСТЕЙ...

Чувашское Государственное Издательство
ЧЕБОКСАРЫ—1931